❑ В.В НИКИФОРОВА






# БОРИС ЧИНДЫКОВ ТАТА ЧĂВАШ КУЛЬТУРИ

**Аннотаци**: Чăваш культурин талккăшĕнче Борис Борисович Чиндыков (1960 ç.ç.) пултарулăхĕ хăйне уйрăм тăрать. Таланчĕ унăн тĕрлĕ енлĕ. Литературăна çеç илес пулсан та, вăл поэзире, прозăра, драматургире палăрчĕ. Куçаруçă, публицист, литература критикĕ пек сахал мар хайлав пичетлерĕ. Наци театрĕсем унăн темиçе пьесине лартрĕç. Чăваш эстрада аталанăвĕнче те унăн вырăнĕ пĕлтерĕшлĕ. Ку статьяра Борис Чиндыков пултарулăхĕн тĕрлĕ енлĕхне кăтартса пама тăрăшнă.

**Тĕп сăмахсем**: Борис Чиндыков, чăваш культури, хальхи литература.

**Boris Çindıkov ve Çuvaş Kültürü**

**Özet:** Çuvaş kültür meydanında Boris Borisoviç Çindıkov’un (Doğum: 1960) kabiliyeti kendisine özgüdür. Onun yeteneği çok yönlüdür. Yalnızca edebî yönden ele alınırsa, o şiirde, nesirde ve dramaturjide kendisini gösterdi. Çevirmen, gazeteci ve edebiyat eleştirmeni olarak çok sayıda çalışma yayınladı. Ulusal tiyatrolar onun çok sayıda piyesini sahnelediler. Çuvaş sahne hayatının gelişiminde onun yeri önemlidir. Bu makalede Boris Çindıkov’un yeteneğinin çeşitli yönlerini göstermeye çalıştık.

**Anahtar Kelimeler:** Boris Çindıkov, Çuvaş Kültürü, Çağdaş Edebiyat.

**Boris Chindykov and Chuvash Culture**

**Abstract**: In the Chuvash cultural arena**,** the talent of Boris Borisovich Chindykov (Birth: 1960) is distinctive. His talent is versatile. When considered only in terms of literary aspect, he proved himself in poetry, prose and dramaturgy. He published numerous works as a translator, journalist and literary critic. National theatres have put a great number of his plays on the stage. His place in the development of Chuvash stage life is of significance. In this article, we tried to show various aspects of Boris Chindykov’s talent.

**Keywords**: Boris Chindykov, Chuvash Culture, Contemporary Literature

Хальхи чăваш культуринче Борис Чиндыков пултарулăхĕ хăйне евĕрлĕхпе, нумай енлĕхпе уйрăлса тăрать. Тĕрлĕ вăхăтра вăл Чăваш Республикин писателĕсен союзĕн литература консультанчĕ тата «Тăван Атăл» журналăн литература тишкерĕвĕпе публицистика пайĕн пуçлăхĕнче ĕçленĕ (1985–1988-мĕш çулсем). «Аван-и» (1990–1994) хаçат учредителĕпе редакторĕ пулнă, «Реклама и объявления» (1992–1993, каярах «Почтовый экспресс» ятпа тухса тăма пуçлать) хаçатсем кăларнă, «Лик Чувашии» (1994–1997) журнала йĕркелесе яраканни тата редакторĕ пулнă, Чуваш.ру сайта уçнă. «Чăваш рекламин чи талантлă креаторĕ тата копирайтерĕ шутланать» – тенĕ ун пирки интернетра («Ирĕклĕх» страници, 2017). Кирек епле ĕçе пуçăнсан та, вăл ăна урăхла, çĕнĕлле йĕркелет, ыттисене тĕлĕнтермелли мĕн те пулин туртса кăларать. Юлашки тĕслĕхсенчен пĕри – «Тăван ен» хаçат проекчĕ. Хаçатăн тĕп редакторĕ пулнă май (2009–2010), вăл ăна пĕр район хаçатĕнчен республикипех сутăнакан «Шупашкар ен хаçачĕ» туса хунă.

Вăл хăй вăхăтĕнчи чăваш çамрăкĕсен кăмăл-туйăмне пичетре çеç мар, эстрадăра та палăртма, уçса пама пултарнă. Б. Чиндыков чăваш поп-музыки пуçламăшĕнче тăрать. Унăн сăввисемпе çырнă юрăсем 1980-мĕш çулсен варринче чăваш пурăнакан пĕтĕм вырăнта сарăлаççĕ. Эстрадăри ăнăçу 1986-мĕш çулта Н. Казаков композиторпа çырнă «Пĕчĕк тăлăх хĕрачам» юрăран пуçланать. «Пукане», «Сана мар», «Ман тĕлĕксен суранĕ», «Селиме», «Эп шутланăччĕ...», тата ыт. юрăсем те, çĕнйĕркелӳ тата ун хыççăнхи чăваш çыннине çывăх пулнă. Каярах çак тапхăра тишкерсе Чиндыков «Чăваш поп-музыкин историйĕ: умтапхăр» (1990) статья çырать.

Çĕнйĕркелӳ идейисем çамрăкĕсене уйрăмах хавхалантарнă. Вĕсем тĕрлĕ ушкăнсем йĕркеленĕ, тĕрлĕ форумсем ирттернĕ (сăмахран, Çеçпĕл форумĕсем); пичетре, телевиденире хăйсен сăмахне хăюллăн каланă. Чăвашлăх, чăваш чĕлхин вырăнĕпе пĕлтерĕшĕ пирки, ăна аталантарасси пирки нумай калаçнă. Б. Чиндыков ку юхăм хастарĕсенчен пĕри пулнă. Вăл литература процессне çĕнетесси пирки нумай шухăшлать, республикăра çеç мар, Мускавра тухса таракан хаçат-журналта та пичетленет. Калăпăр, кунта «Литературная Россия» хаçатра пичетленнĕ диалога асăнма пулать (Хузангай и Чиндыков 1987). А. Хузангай критикпа пĕрле вĕсем çав вăхăтри литература процессне тиркевлĕ куçпа хак параççĕ, чăваш литературин пуласлăхĕ пирки шухăшлаççĕ.

Тĕрĕссипе, çĕршывра çĕнйĕркелӳ пуçланичченех Б. Чиндыков «чăваш ыйтăвĕсем» пирки уççăн калаçма пуçлать. 1984-мĕш çулта республикăра тухса тăракан «Молодой коммунист» хаçатра вал «Уроки чувашского» ятлă статья пичетлет (Чиндыков 1984). Статья хыççăн пичетре анлă дискусси пуçланать. Унта хутшăнакансем чăваш чĕлхин вырăнĕпе пĕлтерĕшĕ, унăн историйĕпе пуласлăхĕ пирки хĕрӳ тавлашаççĕ. Б. Чиндыков хăйĕн статьйисенче наци культурипе наци аталанăвĕ, халăх пуласлăхĕ пирки шухăшлать, вулакансене те пĕрле шухăшлама хистет («Двуязычие и национальный вопрос», 1988; «Малалла каяс тесен», 1989; «Хушшăмăрти чикĕсем çинчен», 1990; «Чăваш тĕрĕк тĕнчин пĕрлĕхĕнче пулайĕ-и?», 1993); çĕнĕ кĕнекесене, ытти авторсен пултарулăхне тишкерет («Ялпа ял çыннисем», 1984, «Полемика в спокойных тонах», 1996, тата ыт.те.).

1980-мĕш çулсенче Б. Чиндыков илемлĕ прозăра, драматургире палăрать. Çыравçă тĕнче литературин опытне ăша илни курăнать: Мускавра Литература институтчĕ пĕтернĕ автор, паллах, тĕнче литературин аталанăвне лайăх пĕлет. Çапах та чăваш çыравçин пултарулăхĕ чăваш литературин чи лайăх традицийĕсене (Игн. Иванов, Е. Еллиев, Ю. Скворцов, Хв.

Уяр) аталантарни куçкĕрет. Чиндыков хăйĕн хайлавĕсенче чăваш халăхĕн шăпи пирки, унăн историйĕпе пуласлăхĕ пирки, паянхи йывăрлăхĕсем пирки пăшăрханать. Ахальтен мар унăн «Çурçĕр хыççăнхи апатлану» (1992) кĕнекине критика «80-мĕш çулсен манифесчĕ» тесе хак парать (Толматов 1993). Прозаик хăй те, унăн геройĕсем те, хăйшĕн анчах мар, йĕри-тавра мĕн пулса иртнишĕн те яваплăха туйса пурăнаççĕ («Геннадий Андреич – ухмах учитель», 1983; «Хĕретнĕ çăмарта», 1988–1989), тата ыт. те. Чăваш халăхĕн малаллахи аталанăвĕ унăн пултарулăхĕнче тĕп ыйтусенчен пĕри пулса тăрать.

1990-мĕш çулсенчи чăваш культурин хутлăхĕнче «Аван-и?» хаçат пĕлтерĕшĕ пысăк. Ку хаçатра пичетленнĕ статьясем, хайлавсем питĕ тĕрлĕ енлĕ пулнă. Кунта наци литератури, ӳнерĕ, музыкине, критикăпа политика ыйтăвĕсене тишкерекен статьясем пичетленнĕ. Çав вăхăтрах çамрăксене кăсăклантаракан куçарусем, тĕрлĕ шайри илемлĕ текст кун çути курнă. Хаçат чĕлхи, пĕтĕмĕшле илсен, яланах чĕрĕ тата ирĕклĕ пулнă, «Ирĕклĕ чăваш сăмахĕ» текен хушма ята тӳрре кăларнă. Чиндыков хаçачĕ чăваш хутлăхне çĕнĕ сывлăш вĕрсе кĕртет, вулакана çĕнĕ хаклăхсем пирки шухăшлаттарать; çамрăксене политика, культура, ӳнер ыйтăвĕсене тимлĕх уйăрма хистет. Ку хаçатра çĕнĕ ятсем палăраççĕ.

Çĕнйĕркелӳ хыççăнхи чăваш драматургийĕ çĕнелнине те тĕпчевçĕсем ытларах Б. Чиндыков пултарулăхĕпе çыхăнтараççĕ (Кириллова 2017: 391). 1982 çулта вăл «Çатан карти çинчи хура хăмла çырли» ятлă пĕремĕш пьеса çырать. Ăна сцена çинче 1990 ç. К.В. Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕ лартнă. Ку пьесăшăн авторне Чăваш патшалăх премине панă (1993).

«Çатан карти çинчи хура хăмла çырли» пьеса тăрăх лартнă спектакль вăл вăхăтри чăваш культурине кисретсе илнĕ тесен те йăнăш мар. Вăл нумай хисеплĕ ята тивĕç пулнă: «Раççейри чи лайăх спектакльсем» (Орёл хули, 1990) конкурсра, Пĕтĕм Раççейри тĕрĕк халăхĕсен фестивалĕнче («Туганлык–1991»,Уфа хули) çĕнтернĕ. Чи лайăххи тесе ăна Шупашкарта та хакласçĕ (Пĕтĕм Раççейри фестиваль «Федерация – 92»). Ку спектакльпе театр Мускавра, С-Петербургра пулнă. Ăна çĕршыври паллă çынсем пысăк хак параççĕ (Кириллов 1993). Драматург тĕнче культурине ăша илсе хăйĕн почеркне шыраса тупнă. Пьесăна туркăлла куçарнă. Ку куçару «Тĕрĕк тĕнчин чĕлхе тата литература журналĕнче» 1997 çулта пичетленнĕ, куçараканĕ М. Йылмаз (Иванов 1997).

Пьесăра халăх философийĕ ӳкерĕннĕ. Чиндыков пире хамăр тымарсем пирки шухăшласа пахма чĕнет. Драматург çын пурнăçĕн пĕлтерĕшĕ пирки, чĕррисемпе вилнисем хушшинчи çыхăну пирки шухăшлать. Чăн чăваш ĕненĕвĕ тăрăх, ĕмĕрлĕхре иртни, хальхи, пуласси пĕр вăхăтрах пурăнаççĕ. Вĕсене Чун пĕрлештерсе тăрать. Тĕслĕхрен, тĕрлĕ вăхăтсем пĕрлешнине эпир Амăшĕ патне Шевлесем килсен туятпăр: иртнĕ пурнăçри çынсем кашни ăна хăйпе пĕрле илсе каясшăн. Пуласлăхĕ те курăнать кунта – ачасем мамаксăр юлассан, вĕсен шăпи тертлĕ пулĕ, мĕншĕн тесен, вăл час-часах ачасемшĕн ашшĕпе амăшĕ вырăнне пулнă. Çатан карта – символ. Вăл ку тĕнчепе леш тĕнчене те, ку тĕнчери çынсене те пĕрлештерет. Çав вăхăтрах вăл уйăрать те пек, çавăнпа Лида пĕтĕмпех касса тăкасшĕн йывăça – нимĕн те кӳршĕсемпе ан пĕрлештертĕр тесе.

Чун вилĕмсĕр тесе ĕненнĕ чăвашсем. Вăл яланах пулнă, пулать те. Пĕтĕм таврари чĕрĕ чунсем (чечексем, кайăксем, тискер чĕр чунсемпе килти чĕрчунсем) чунлă. Çак чунсем пур те пĕр тан. Ахальтен мар Радикпе Марине улмуççи сывланинене, лĕпĕшсем макăрнине те туяççĕ. Пьесăра çĕр сăнарĕ (чăвашсен тĕнче курăмĕнче те) питĕ пĕлтерĕшлĕ. Тĕлĕкре Радик «Тăпраран пулнă –

тăпрах пулатпăр» тенине ăнланса илет. *«Тăван çĕр-шыв»* пирĕн «çĕр» тата «шыв» сăмахсенчен тăрать. Чăваш çут çанталăка туйса пурăннă. Хăйĕн пурнăçне ĕмĕрлĕхĕн пĕр саманчĕ тесе йышăннă.

«Урасмет» (1993) трагедире те тĕпре – чăваш идеи, унăн малашлахĕ пирки шухăшлани. Чăваш историне Чиндыков ĕмĕрлĕх контекстне кĕртет. Сюжет никĕсенче – Урасмет çинчен хывнă легенда. Пусмăрçăсен аллинчен влаç илсен, вăл хăйĕн халăхне сутать. Власть, чыспа чыссăрлăх, шанчăхлăхпа сутăнчăклăх ыйтăвĕсем кирек хăш ĕмĕрте те пĕлтерĕшлĕ. 90-мĕш çулсенче Чиндыков «Алăксем умĕнче» (1995), «Хупланнă тĕкĕрсем» (1997) драмасем çырать. «Масаркасси ясарĕн 77 матки» (1998) юрăллă, ташăллă, стриптизлă фарс – Чиндыков пултарулăхĕн тепĕр тĕсĕ (кулăшла жанр).

Унăн «Хура чĕкеç» (2002) монодрама чăваш литературипе театр аталанăвĕнче паллă вырăн йышăнать. Пĕтĕм чăваш литературине илес пулсан та, хальлĕхе ку пĕртен-пĕр монодрама. Тата, паллах, илемлĕх тĕлĕшĕнчен пăхас пулсан, Чиндыков пьеси çав тери хăйне евĕрлĕ. Ăна СССР халăх артистки В. Кузьмина 80 çул тултарнă тĕле ятарласа çырнă. Ку хайлавра чăваш хĕрарăмĕпе чăваш халăх шăпи сăнарланнă. 2006-мĕш çулта чăваш театрĕ ку спектакльпе Турцире иртекен тĕрĕк халăхĕсен театрĕсен фестивальне хутшăнать.

2008 çулта Б. Чиндыковпа Н. Казаков «Нарспи» мюзикл лартаççĕ. Çапла май, Б. Чиндыков пĕрремĕш чăваш мюзиклĕн (рок-оперăн) либреттине çыраканĕ пулса тăрать. Ку авторсем классикăлла хайлава çĕнĕлле «вуланă», паянхи чăваш кураканне хускатма пултаракан ĕç лартма пултарнă. 2010 çултах çак авторсем тăрашнипе филармони сцени çине «Авалхи сас» проект тухать. Унти текстсен авторĕ – Борис Чиндыков. Ку ĕç паян пуранакансене хамăрăн пуян культурăна туйса, ăнланса илме пулăшать.

Авторăн вырăсла çырнă хайлавсем те пур: «Шведский стол» (пьеса тĕсне «Просвещёная игра в четыре сердца» тесе палăртнă, 2003), ачасем валли çырнă «Царский сад» ятлă пьеса (Патша сачĕ, 2007), «Возвращение хана» (Хан таврăнни, 2000) калав (Чиндыков 2005). Асăннă калавра прозаик республикăри лару-тăру пирки, наци хăй евĕрлĕхĕ пирки шухăшлать.

Ытти авторсен хайлавĕсене кун çути кăтартас тĕлешпе те чылай ĕçлет Б. Чиндыков. 1990-мĕш çулта вăл «Утăм» ятлă кĕнеке пухса кăларать. Унта А. Тарасов, Л. Сачкова, С. Эртиван, В. Эктель, В. Степанов, И. Дмитриев, В. Иовлев, Л. Сарине, А. Смолин, Б. Чиндыков хайлавĕсем пичетленнĕ. Çамрăк авторсен пултарулăхĕнче пухса кăларакан «халиччен курма хăнăхнă пулăмсене çĕнĕ куçпа пăхса хаклама пикенни те, сăнарсене хăйне евĕрлĕ тума тăрашни те» курать (Утăм, 1988: 2). Чăваш литературипе культуринче ку авторсем каярах пурте палăрнă. Юлашки çулсенче çыравçă ытти çыравçăсен пултарулăхне кун çути кăтартас тĕлĕшпе нумай ĕç турĕ. Вăл тăрăшнипе А. Медведев («Чун хыпса çунсан», 2018), И. Дмитриев («Хĕрĕх чалăш хĕрлĕ ту», 2019) хайлавĕсем уйрăм кĕнекен пичетленсе тухрĕç.

2015–2016-мĕш çулсенче Б. Чиндыков «Чувашский рассказ» (Чăваш калавĕ) ярăмпа икĕ кĕнеке пухса кăларать Пĕрремĕшĕнче, «Дети леса» (Вăрман ачисем) томра, автор чăваш калавĕн чи илемлĕ тĕслĕхĕсене суйласа илнĕ, вĕсен вырăсла куçарăвĕсене пичетленĕ. Кĕнекере XIX–XXI ĕмĕрсенче палăрнă 39 прозаикĕн калавĕсем кун çути курнă. Ку кăларăм чăваш литературишĕн питĕ пĕлтерĕшлĕ пулнине тӳрех асăрхарĕç критиксем: «Туллилĕх, куçарусен шайĕ, эстетикăпа илемлĕх туйăмĕ, çирĕп алăпа хăюлăх (тен, теветкеллĕх те), ăслăлăх шайĕ (литература

тĕпчевçисемшĕн паха тĕслех)…» (Артемьев 2016). Ку ярăма чăваш прозипе ытти халăх вулаканĕсене паллаштарас тĕллевпе йĕркеленĕ. Иккĕмĕш томĕ «Родные берега» (Тăван çырансем) ятлă. Унта вырăсла çырнă 55 калав кĕнĕ. Авторĕсем – Чаваш Республикинче тата ытти регионсенче пуранакан вырăсла çыракан прозаиксем. Çакнашкал кăларăм ку таранччен пулманччĕ-ха.

Чиндыков пултарулăхĕн тепĕр енĕ вăл – куçару ăсталăхĕ. Туркăлларан (Н. Хикмет), акăлчанларан (О. Уальд), вырăсларан чăвашла куçарать, чавашларан тата туркăлларан – вырăсла.

2018-мĕш çулта Мускавра хальхи проза антологийĕ пичетленнĕ («Современная литература народов России: Проза / Антология). Унта кĕме тивĕç пулнă чăваш прозикĕсенчен пĕри – Борис Чиндыков.

Пĕтĕмлетсе каласан, Борис Чиндыковăн хăйне евĕрлĕ пултарулăхĕ чăваш культуринче чăннипех те пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнать.

**Усă курнă литература**

Артемьев, Юрий (2016). «Кирлĕ-и пире çапла кисретсе илни?». *Хыпар*. 2016. Кăрлач уйăхĕн 19-мĕшĕ. 9 с.

Иванов, Илле (1997). «Борис Чиндыкова туркăлла вулаççĕ». *Хыпар*. 1997. Авăн уйăхĕн 3-мĕшĕ. 3 с.

Кириллов, Кирилл (1993). «Кирлехчĕ çак виçĕ каç». *Хыпар*. 1993. Чӳк уйăхĕн 18-мĕшĕ. 3 с.

Кириллова, Ирина (2017). "Время перестройки и возвращение эстетических критериев (середина 1980-х–2000 гг.). Драматургия." *История чувашской литературы XX века. Часть 2 (1956–2000): коллективная монография*. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во. С. 391–394.

Толматов, Валерий (1993). «80-мĕш çулсен манифесчĕ». *Хыпар*. 1993. Çĕртме уйăхĕн 10-мĕшĕ. 3с.

*Утăм* (1988). Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви.

Хузангай, Атнер (1987). Чиндыков Борис: «Поверх барьеров». *Литературная Россия.* 1987. 29 мая. № 22.

Чиндыков, Борис (1984). «Уроки чувашского». *Молодой коммунист*. 1984. Октябрь 23, 25.

Чиндыков, Борис (2005). «Возвращение хана». *Современная литература народов России*. Т. 4. Проза. Книга 2. Москва: Независимое издательство «Пик», 2005. С. 452–468.

«Ирĕклĕх» страници. 1 августа 2017 г., https://m.vk.com/wall-45648426_5597 (Дата поиска: 14 февраля 2020 г.).